К84.09(=Чув)
А41
Ч-40255

Сантăр АКСАР
Сандор АКСАР

Силпи çăл куçĕ
Сильбийский родник

Анатолий Смолин куçарнă
перевод Анатолия Смолина



Сантăр Аксар

СИЛПИ ÇĂЛ КУÇĔ

Сандор Аксар

СИЛЬБИЙСКИЙ РОДНИК



САНТĂР АКСАР

ÇИЛПИ ÇĂЛ КУÇЁ

Сăвăсем
Юрăсем
Поэма

Чăвашларан
Анатолий Смолин
куçарнă

Шупашкар
2006

САНДОР АКСАР

СИЛЬБИЙСКИЙ РОДНИК

Стихи
Песни
Поэма

Перевод
с чувашского
Анатолия Смолина

Чебоксары
2006

ББК 84 (2 Рос. Чув.) 6-5

Ум сăмахне çыраканĕ тата куçараканĕ – Трубина Мархвипе Çеçпĕл Мишши, Çемен Элкер тата Фатых Карим премийĕсен лауреачĕ, Чăваш Республикин культура тава тивĕçлĕ ĕçченĕ **Анатолий Смолин.**

Сантăр Аксар. Çилпи çăл куçĕ. Сăвăсемпе юрăсем, поэма. – Шупашкар, 2006. – 75 с.

Кĕнекене поэтăн тĕрлĕ çулсенче çырнă, Анатолий Смолин вырăсла куçарнă сăввисемпе юррисем тата «Аван-и, ялăм!» поэми кĕнĕ.

Автор предисловия и переводчик – лауреат премий им. Марфы Трубиной, Михаила Сеспеля, Семена Эльгера и Фатыха Карима, заслуженный работник культуры Чувашской Республики **Анатолий Смолин.**

Сандор Аксар. Сильбийский родник. Стихи и песни, поэма. – Чебоксары, 2006. – 83 с.

В книгу вошли написанные поэтом в разные годы стихи, песни и поэма «Здравствуй, село!» в переводе на русский язык Анатолия Смолина.

© Сандор Аксар (Мефодьев А. И.), 2006.
© Анатолий Смолин (Смолин А. С.), 2006.

ЫрӑтуслӑХ мулран хаклӑрах...

Доброе братство милее богатства…

Тёссемпе туйăмсен алхасăвĕ

«Поэзин пулмалла айвантарах та», – тенĕ хăй вăхăтĕнче А. С. Пушкин. Паллах ĕнтĕ, вăл поэзи ăсăр та ниме юрăхсăр япала пулмалла темен, пачах та урăхла – Александр Сергеевич сăвăсен урăмсурăм хăватне, урăхла каласан, туйăмсен ирĕклĕхĕпе шухăшсен алхасăвне, вĕсемсĕр поэзи пулма та пултарайманнине шута илнĕ. Вырăссен аслă çыравçи каланине эпир кăштах улăштарасшăн, хальхи сĕм парасшăн: «Поэзи – вăл пуçтахлăхпа иртĕхӳлĕхĕн уйрăм тёсĕ». Çак шухăш Пушкăртстан халăх поэтне Мустай Карима та килĕшнĕччĕ. Александр Мефодьевăн – Сантăр Аксарăн (сăмах май, вăл та Александр!) сăввисемпе паллашнă май, – вĕсенче шăпах çав сăрăсемпе туйăмсен алхасăвне асăрхатăн. Пĕрре пăхма Александр Ивановичăн (манăн вĕрентекенĕмĕн тата çав тери ырă çыннăн) поэзийĕ нимĕнпех те уйрăлса тăмасть темелле (калăпăр, Г. Айхинни пек мар), анчах та шăпах чăвашла, тинкеререх пăхсан, унăн ансат йĕркисенче маларах курăнсах кайман пĕрчĕсемпе тĕпренчĕксене те асăрхатăн. Çакă пулать те ĕнтĕ, пирĕн шутпа, Поэзи сипечĕ.

Сантăр Аксарăн вулакансене сĕнекен сăввисен ярăмĕ поэтăн пĕтĕм пултарулăхĕ мар, «сăмах çилтăманĕнчи» «пуçтахлăхпа иртĕхӳлĕхĕн» уйрăм палăрăмĕ, пĕр пĕчĕк пайĕ çеç. Çапах та вăл самаях пысăк пĕлтерĕшлĕ.

Анатолий Смолин,
Трубина Мархви, Çеçпĕл Мишши, Çемен Элкер тата Фатых Карим премийĕсен лауреачĕ, Чăваш Республикин культура тава тивĕçлĕ ĕçченĕ.

Буйство красок и чувств

«Поэзия должна быть глуповата», – изрек в свое время А. С. Пушкин. Конечно же, он не имел в виду, что поэзия должна быть примитивной или пошлой, отнюдь – Александр Сергеевич предполагал стихию стиха, т.е. свободу эмоций и буйство мыслей, иначе не будет поэзии как таковой. Высказывание светоча русской литературы мы, осовременив, несколько переиначили: «Поэзия – это разновидность хулиганства». Наше суждение пришлось по нраву даже народному поэту Башкортостана Мустаю Кариму. Перечитывая стихи Александра Мефодьева (кстати, тоже Александр!) – Сандора Аксара, в них мы уловили именно то буйство красок и чувств. На первый взгляд, поэзия Александра Ивановича (моего наставника и прекрасного человека) кажется «обыденной» (ну, скажем, не как у Г. Айги), но если приглядеться пристальнее, чисто по-чувашски, в его «простых» строчках найдешь ту изюминку, то зерно. Это и есть, на наш взгляд, кладезь Поэзии.

Предлагаемая вниманию читателей подборка стихов Сандора Аксара, не есть вся палитра его творчества, а лишь толика, малая часть «хулиганства» в «словесной вьюге». Но тем не менее они весьма показательны.

Анатолий Смолин,
лауреат премий им. М. Трубиной,
М. Сеспеля, С. Эльгера, Ф. Карима,
заслуженный работник культуры Чувашской Республики.

АННЕМЎР, ЭСЎ – САР ХЎВЕЛ

Аннемўр, эс пўртен пўрре
Вышкайсăр аслă тўнчере.
Çут çăлтăр евўр ўмўрех
Çунатăн пирўн чўрере.

Аннемўр, эсё – шурăмпуç,
Пин-пин шевлеллё сар хўвел,
Чўр кўмўл шывлă тăр çăлкуç,
Чи çутă ăраскал, телей.

Хўвелсўр шăтаймасть калча,
Папка та унсăр тухаймасть.
Аннесўр ўсеймест ача,
Пўр паттăр та çуралаймасть.

Çиçеççё ăшшăн куçусеем –
Мўн чуль ачашлăх вўсенче.
Вăр-вар та çепёç аллусем –
Çук ун пекки тек çўр çинче.

Тўнче илемўпе пўрле
Тăван чўлхемўр илемне
Туйма вўрентрўн пўчўклех,
Парса чăвашлăх хўлхемне.

Сайра килетпўр-çке яла,
Пире каçарччё, ан хурлан.
Сан умăнта, аннем, ялан
Эпир виçесўр парăмра.

О, МАМА – НЕЖНАЯ ЗАРЯ

Одну – единственную мать
Должны мы до небес поднять,
В нас вечно будешь ты сиять,
Сердца звездою освещать.

О, мама – нежная заря,
Ты – солнцем залитый рассвет.
Источником любви горя,
Ты даришь детям счастья свет.

Росток без солнца не взойдет,
Не зашумит лесок листвой.
И плод без матери не плод,
И не придет на свет герой.

В твоих сияющих очах
Так много ласки, теплоты.
Огромный мир в твоих руках,
Свет очага несешь в них ты.

Через тебя к добру привык,
И с красотою жить мне впредь.
Ты мне дала родной язык,
Чтобы огнем любви гореть.

Пытаешься нас оправдать,
Хоть редко едем мы домой.
О, дорогая наша мать,
Всегда в долгу мы пред тобой.

Пуçлать çулне çырма çăлтан
Чăлтăртатса, шăнкăртатса.
Çемье вара, аннем, санран
Каять сăваплăн пуçланса.

Аннемĕр ырă кăмăлне
Курасчĕ, эх, ачасенче.
Асамлă çутă сăнарне
Пуç тайтăр, палăк пек, тĕнче.

С истока путь берет ручей,
Журча, сверкая и звеня.
Семья же с помощью твоей
Берет начало в свете дня.

Хотелось бы, чтоб у детей
Была такая ж доброта.
Чтоб перед матерью своей
Склоняли головы всегда.

ЭП ТЕЛЕЙЛЁ

Мăшăрăм та пур,
Ачамсем те пур –
Эп телейлĕ.
Çавăнпа юрлатăп.

Аллăмсем те пур,
Ёçём те ман пур –
Эп телейлĕ.
Çавăнпа юрлатăп.

Кураç-ха куçсем,
Утаç урасем –
Эп телейлĕ.
Çавăнпа юрлатăп.

Тăвансем те пур,
Тусăмсем те пур.
Эп телейлĕ.
Çавăнпа юрлатăп.

Çĕршывăм та пур,
Халăхăм та пур –
Эп телейлĕ.
Çавăнпа юрлатăп.

Я – СЧАСТЛИВЫЙ

Я жену имею
И детей лелею:
Я – счастливый,
Потому пою.

Руки я имею
И творить умею:
Я – счастливый,
Потому пою.

Ноги я имею,
Вижу мир милее:
Я – счастливый,
Потому пою.

Я друзей имею,
Нет родни роднее:
Я – счастливый,
Потому пою.

Родину имею
И народ наш с нею:
Я – счастливый,
Потому пою.

ШУПАШКАР

Шупашкарăм Атăл хĕрринче
Аякран çăтмах пек курăнать.
Вăл кашни чăвашăн чĕринче
Хĕм парса ăш-пиллĕн пурăнать.

Хушса юрламалли:

Эх, эс, шурă Шупашкар,
Шукăль Шупашкар,
Манăн шанчăк, тĕп тымар.
Чунăмри кăвар.

Сăрт-сăрт урлă тӳрĕ урамсем
Тăсăлаç çип çапнă пек инçе.
Çурчĕсен кăвак кантăкĕсем
Ялкăшса çиçеç хĕвел çинче.

Юмахри пек капăр çич кĕпер –
Шупашкар илемĕ, тупата.
Карлăкĕсем чĕнтĕрлĕ, чипер –
Савнисемшĕн хăтлăх çĕр хута.

Ярăнса хула урамĕпе
Вĕçсĕрех иртеççĕ машинсем.
Хурăнлăх, çăкалăх хушшипе
Ăраскал патне васкаç çынсем.

ШУБАШКАР

Шубашкар на волжском берегу –
Чувашей надежда и оплот.
В сердце древний город берегу, –
Он же бережет родной народ!

Припев:

Эх, ты славный Шубашкар –
Белоснежный град,
Словно даришь сердца жар,
Тебе каждый рад!

Дорог здесь овраг и косогор,
Каждый переулок и проспект,
Твоих окон лучезарный взор
Дарит теплоту свою и свет!

Сказочны ажурные мосты,
Ими связан здесь и млад и стар:
Нет чудесней этой красоты
И прекрасней нет, чем Шубашкар!

Липы и березы – словно дар
И благословение судьбе.
Здравствуй, вечно юный Шубашкар,
Всех удач желаем мы тебе!

УТАҪҪӖ САЛТАКСЕМ!

Утаҫҫӗ салтаксем,
Салтак-ветерансем,
Медальлӗ-орденлă ҫынсем.
Систернĕрен ӳтри суран,
Кăштах эрех те сыпнăран
Пускаласа аран-аран
Уяв урамĕпе утаҫҫӗ.

Утаҫҫӗ салтаксем,
Салтак-ветерансем,
Медальлӗ-орденлă ҫынсем.
Ҫăмăллăхсемсĕр юлнăран,
Ҫĕнсе илни ҫухалнăран
Трибун енне пăхса кăран
Уяв урамĕпе утаҫҫӗ.

Утаҫҫӗ салтаксем,
Салтак-ветерансем,
Медальлӗ-орденлă ҫынсем.
Пуласлăхшăн пăшăрханса,
Ҫĕршыв шăпишĕн пăлханса,
Тӳресене вăрҫса-сурса
Уяв урамĕпе утаҫҫӗ.

Утаҫҫӗ салтаксем,
Салтак-ветерансем,
Медальлӗ-орденлă ҫынсем.
Усал вăй илнине курса,
Илем арканнине туйса,
Мул тĕнчине ылхан сунса
Уяв урамĕпе утаҫҫӗ.

Утаҫҫӗ салтаксем,
Салтак-ветерансем,
Шупашкарта пурнакансем.
Чăваш тĕнчишĕн кулянса,
Чĕлхе чакнишĕн хурланса,
Ҫапах теме кĕтсе-шанса
Уяв урамĕпе утаҫҫӗ.

СОЛДАТЫ ИДУТ!

Идут солдаты,
Солдаты-ветераны,
А на груди у них – медали, ордена.
Хотя зудят и раны,
Встав нынче утром рано,
Быть может, выпив граммы,
На праздник свой идут.

Идут солдаты,
Солдаты-ветераны,
А на груди у них – медали, ордена.
Идут они в печали
За то, что потеряли,
Что льготы их отняли,
На праздник свой идут.

Идут солдаты,
Солдаты-ветераны,
А на груди у них – медали, ордена.
Что жизнь теперь другая,
Очами зло сверкая,
Чиновников ругая,
На праздник свой идут.

Идут солдаты,
Солдаты-ветераны,
А на груди у них – медали, ордена.
Что рушится святое,
Что ценится пустое,
И проклиная злое,
На праздник свой идут.

Идут солдаты,
Солдаты-ветераны,
А на груди у них – медали, ордена.
Все те, кто в Чебоксарах
Живет с мечтой о старом,
И веря, что недаром
Вложили душу в труд,
Идут солдаты,
Солдаты-ветераны,
На праздник свой идут.

ШУРĂМПУÇĔН ÇĂЛТĂРНЕ

Шурăмпуçĕн çăлтăрне
Тытайса курасчĕ.
Ун асамлă йăлтăрне
Ял çине сапасчĕ.
Шевлесен ытамĕнче
Пĕр санпа пуласчĕ.
Ватă йăмра айĕнче
Киленсе ларасчĕ.

Çут кĕвенте-çăлтăра
Тытайса курасчĕ.
Ик витре çакса часрах
Çăл патне анасчĕ.
Пĕчĕк йĕс сăмавара
Чĕртейсе ярасчĕ.
Ыр сунса вара сана
Чейпеле сăйласчĕ.

Хŭхĕм ала-çăлтăра
Тытайса курасчĕ.
Тин çеç çапнă çĕн тырра
Унпала алласчĕ.
Çавăрасчĕ кĕрпене,
Хурана ярасчĕ:
Çу сĕрсе вир пăттине
Сан умна лартасчĕ.

Ылтăн алтăр-çăлтăра
Тытайса курасчĕ.
Çав сăваплă алтăра
Сăра тултарасчĕ.
Хамăр чăваш йăлипе
Сана тав тăвасчĕ.
Сиплĕ урпа сăрипе
Кăмăлна уçасчĕ.

УТРЕННЮЮ ДА ЗВЕЗДУ

Утреннюю да звезду*
В руки б взять резвее,
И ее свет-красоту
По селу б развеять.
В пламени зари с тобой
Быть бы вместе, рядом,
Наслаждаясь под ветлой
Лучезарным взглядом.

Коромысло – Орион**
Мне б схватить и птицей
Полететь бы под тот склон,
Где родник струится.
Самоварчик бы потом,
Эх, поставить б медный!
Тебя чаем и медком
Угостить б немедля.

Сито звезд Плеяды*** днем
Взять бы в руки с толком,
И просеять бы мне в нем
Зернышки, что с тока.
А потом крупу пшена
Да в котле б пропарить.
Кашу с маслицем сполна
Пред тобой б поставить.

Звездный Ковш**** тот золотой
В руки б взять степенно,
И наполнить б Ковш святой
Пивом белопенным.
Чтя обычай чувашей,
С чувством и учтиво
Предложить б тебе, ей-ей,
Дивное то пиво.

---

* Шуромпусь (чув.) – Утренняя звезда: Венера?
** Кевенте сёлдор (чув.) – Звезда – Коромысло, созвездие Ориона.
*** Ала сёлдор (чув.) – Звезда – Сито, созвездие Плеяды.
**** Алтор сёлдор (чув.) – Звезда – Ковш, созвездие Большой Медведицы.

САРĂ ХЎВЕЛ САВНĂ ПЕК...

Хĕвел пăхрĕ сăнаса,
Атăла шырарĕ.
Тупрĕ те шевле ярса
Хумсемпе вылярĕ.
Хĕвел шыва савнă пек
Ман сана савасчĕ.
Киленесчĕ çўçўпе,
Ăшшăн ачашласчĕ.

Вĕлле хурчĕ ĕшнене
Килчĕ те пыл пухрĕ.
Юратса пур çеçкене
Ыталарĕ-тухрĕ.
Манăн та пыл хурчĕ пек
Сана ыталасчĕ.
Туту пиçнĕ çырла пек –
Тутанса пăхасчĕ.

Сывлăм ўкрĕ çĕр çине,
Курăка чуптурĕ.
Чăвашсен уйне-хирне
Çут шăрçаллă турĕ.
Сывлăм хире савнă пек
Ман сана савасчĕ.
Кăмăлтан, чун хĕмĕпе
Хыттăн чăмăртасчĕ.

СОЛНЦЕ, ВЫЙДЯ ИЗ-ЗА ТУЧ…

Солнце, выйдя из-за туч,
Озарило Волгу.
Заиграл его блик-луч
Над волною вольной.
Как и солнце любит плес
С ласкою безбрежной,
Мне волну твоих волос
Гладить бы так нежно.

На опушочке пчела
Запаслась нектаром.
Влюблена она была,
Знать, в цветы недаром.
Мне подобно той пчеле
Губ твоих коснуться,
Мне бы на твоем челе
Поутру проснуться.

Не медвяная ль роса
Обнялась с травою,
То ведь бусинка-краса
Над моей страною.
И росу ту пригубя,
Все ж скажу опять я:
Я хочу, любя, тебя
Заключить в объятья.

ЮРАТУ – САР ТЁПЕЛ...

Юрату – чӗрери сар тӗпел.
Юрату – чи хӗрӳллӗ хӗвел,
Ик шевлийӗ – эпир санпала.
Çавăнпах вăл хӗрӳ пулмалла.

Юрату – шăнкăрти юханшыв.
Тасарах шыв эс тек тупăн-ши?
Ик çыранӗ – эпир санпала,
Çавăнпах вăл таса пулмалла.

Юрату – улăп пек аслă ту.
Пăхсан çӗлӗк ӳкет, ай, асту!
Ик тăррийӗ – эпир санпала.
Çавăнпах аслă та пулмалла.

Юрату – пахчари улмуççи.
Шурă тумлă, чечен, чун уççи.
Ик йуппийӗ – эпир санпала.
Çавăнпах вăл чечен пулмалла.

Юрату – тӳпери мăн хăлат.
Иксӗлми вăй – унра, чӗр хăват.
Ик çуначӗ – эпир санпала.
Çавăнпах вăйлă та пулмалла.

ВЕДЬ ЛЮБОВЬ – КРАСНЫЙ УГОЛ В ТИШИ…

Ведь любовь – красный угол в тиши.
Ведь любовь – это солнце души.
А с тобою же мы – два луча,
Потому и любовь горяча.

Ведь любовь – гор стремленье в зенит.
Как посмотришь – вмиг шапка слетит.
Две вершины, смотри, мы с тобой,
Потому, знать, с большою душой.

Ведь любовь – как орел воспарит,
Сколько силы в себе он хранит.
Мы с тобой у орла – два крыла,
Мать - природа нам силы дала.

Ведь любовь – это яблони цвет:
Белоснежней, нежней его нет.
Две развилины – мы же с тобой,
Потому, знать, с прекрасной судьбой.

Ведь любовь – как звенящий ручей:
Нет прозрачней его и светлей!
А два берега – мы ведь с тобой,
Потому, знать, славны чистотой.

ПУЛАР-И ПЁРЛЕ

Шăпчăк шăхăрса юрлать-çке
Мăшăрĕпеле.
Эпĕр те санпа юрлар-и
Савăнса пĕрле.

Кукăр-пăрнăç пурнăç çулĕ,
Пĕччен çул – çул мар.
Эпĕр пĕр шăпаллă пулĕ –
Иккĕнех утар.

Акăш ярăнса ташлать-çке
Мăшăрĕпеле.
Эпĕр те санпа ташлар-и
Çĕкленсе пĕрле.

Шăнкăрч телейне пайлать-çке
Мăшăрĕпеле.
Эпĕр те санпа пайлар-и
Телее пĕрле.

ВДВОЕМ

Соловьи поют, ликуя,
Парами порой.
Песенку споем такую
Вместе мы с тобой.

У судьбы зигзагов много,
По́рознь – не путь.
Мы пойдем с тобою в ногу –
Лишь со мною будь.

Парой лебедей не всуе
Занят водоем.
Может быть, с тобой станцуем –
Будем же вдвоем.

И скворцы же делят счастье,
Данное судьбой.
Так разделим на две части
Счастье мы с тобой.

* * *

Асăма килетĕн
эс анчах.
Тĕлĕкре курнатăн
эс анчах.
Чĕрере пурнатăн
эс анчах.
Çуткăçăн çунатăн
эс анчах.

* * *

Все мои мечты –
только ты.
Сон без суеты –
только ты.
Жизнь без пустоты –
только ты.
Свет без темноты –
только ты.
Гений красоты –
только ты.

КЁТСЕМ САЛТАКА

Савнипе тăратăп
Хурăн айĕнче.
Салтака каятăп
Ыран ир çинче.

Тусăмçăм, çырсамччĕ
Тăтăш çырусем.
Сăмахна тытсамччĕ:
Эс кĕтсе илсем.

Халăх ятне ямăп
Раççей çарĕнче.
Сыхă-сыхă тăрăп
Çĕршыв чиккинче.

Хĕсметре, туятăп,
Çăмăл иртмĕ кун.
Кĕç, ак, уйрăлатăп,
Пăлханать яш чун.

Çăлтăрсем çунаççĕ
Çӳллĕ тӳпере.
Ăраскал сунаççĕ
Халь вĕсем пире.

СОЛДАТ ВЕРНЕТСЯ

Под березой белой
Милой, дорогой
Говорю несмело:
– Скоро встану в строй.

Уж не будем вместе,
Там – снега, дожди…
Ты же шли мне вести
И меня дождись.

В стороне неблизкой
Нелегки пути.
В армии Российской
Службу мне нести.

Буду на границе
Родину стеречь.
В сердце сохранится
Сладость наших встреч.

Звездами мигает
Светлый небосклон.
Счастья нам желает
И успехов он.

ИРТЕТ ЁНТЁ ХУРА КЁРКУННЕ...

Иртет ёнтё хура кёркунне,
Аскăн çил хăвалать сив хумне,
Эп кёретёп салхун ял садне,
Асилетёп савни сăмахне.

Кайнă майăн тухса инçене
Килме пулчё килне кёр енне.
Хёл çитет – вăл çаплах таврăнмасть,
Виçё уйăх çыру та çырмасть.

Шăнса кӳтрёç садра чечексем,
Шанса кайрёç кёрен çеçкисем.
Чунăмра çеç ман тунсăх сӳнмест,
Юрату çав-çавах сивёнмест.

НА ИСХОДЕ ОСЕННИЕ ДНИ…

На исходе осенние дни,
Они волнам холодным сродни.
Да и сад сельский наш грустноват,
Вспоминаю любимой слова.

Расставаясь, смягчила ты грусть,
Обещав мне: «Под осень вернусь».
Вот уже наступила зима –
Ни вестей от тебя, ни письма.

Уж замерзли в саду все цветы –
Всюду здесь стужи зимней следы.
Только нет на душе мерзлоты –
Ведь её согреваешь мне ты.

* * *

Çуллахи кану пуçламăш умĕн
Йышпала çыр хĕррине тухсан
Уява сасартăк чарчĕ çумăр
Витререн шыв янă пек тăкса.

Кам ăçта... чăл-пар саланчĕ-тарчĕ.
Эп çеç юлтăм тăр-пĕччен тăрса.
«Ай-ах! – терĕн эс, – пире каçарччĕ»,
Чупрăн-килтĕн сунчăкна йăтса.

Тин сыватăшран эп таврăнсаччĕ,
Сăрлатсах тăратчĕ-ха шăм-шак.
Витрĕ витĕрех, шăнтсах та ячĕ
Чĕтĕреттĕм ернĕн тытамак.

Çав самант эс чăн-чăн турă пултăн,
Хăв çумна хӳтте илсе мана.
Тĕршĕнсе çемçен, шӳт турăн,ултăн,
Çапрĕ ăшă хум ӳте, юна.

Кĕлеткӳ вут пек вĕриччĕ ĕнтĕ,
Çӳç кăшт кăтăклатчĕ питĕмрен.
Çĕтрĕ кĕç таçта кайса сив ĕнтрĕк,
Эс хуллен тытсассăн пилĕкрен.

Унтанпа нумай-нумай çул иртрĕ,
Шав çаплах çумра тăран пек эс.
Çав ăшша туятăп каç та, ир те.
Çук, çĕтмест вăл темшĕн, сĕврĕлмест.

* * *

Это было до каникул, летом:
Вышли мы на берег всей гурьбой.
Как бы из ружья пальнув дуплетом,
Разразился ливень вдруг с грозой.

Кто куда… Потоп грозит казалось.
Я один остался под дождем.
Ты же, подбежав с зонтом, сказала:
«Ничего, дождь вместе переждем!..»

Весь продрог, как будто лист осины –
Из больницы выписан я был.
Мое сердце колотилось сильно –
Я застыл и пыл совсем остыл.

Ты меня богиней защитила,
Заслонила от дождя зонтом.
Все шутила, улыбалась мило,
Грела ты меня души теплом.

Приключилось все внезапно, разом:
Руку обожгла мою рукой –
От жары вдруг потерял я разум,
Навсегда я потерял покой.

Сколько б лет с тех пор ни миновало,
Ты, как будто, рядом, предо мной.
Как тогда мне душу согревала,
Греешь до сих пор своей душой.

АН КАЙ, ÇАМРĂКЛĂХ

Çитрĕ çуркунне,
Сарчĕ çунатне.
Тухрăм ирхине
Улма пахчине.
Садри йывăçсем
Шап-шур çеçкере.
Чуна çеç кичем,
Тунсăх – чĕрере.
Шăпчăк юррине
Ай, итленĕçем
Тухрĕç куç умне
Çамрăк вăхăтсем.
Çурхи кунăмсем
Иртмĕç теттĕм те,
Иртрĕç-çке вĕсем,
Сисеймерĕм те.
Шăнкăрчсем вĕçсе
Çитрĕçĕ яла.
Яшлăх çеç çиçсе
Килмĕ каялла.
ЬIрăччĕ мана
Вун çиччĕре чух.
Тавăрма çавна
Халĕ майĕ çук.
Çамрăк вăхăтсем
Ăçта çĕтрĕç-ши?
Ма ытла вĕсем
Хăвăрт иртрĕç-ши?
Юханшыв юхать,
Малаллах васкать.
Çамрăклăх юртать,
Каялла чакмасть.
Яшлăхăм-ырсем,
Чарăнсам самант.
Çиçĕм пек иртсе
Чуна ан амант.

ЮНОСТЬ, ПОДОЖДИ

Вот пришла весна,
Каждый вновь крылат.
Я, не зная сна,
Утром вышел в сад.
Все белым-бело,
Яблони в цвету.
Сердцу – не тепло,
Грустно мне в саду.
Трелям соловья
В забытьи внимал –
Будто снова я
Молод и удал.
Думал, что всегда
Буду молодым:
Юности года
Тают, словно дым.
Вон скворцы опять
Прилетели к нам.
Не пойти уж вспять
Юности годам.
Как же был я рад,
Ах, в семнадцать лет!
Их вернуть б назад, –
Только средства нет.
Молодости дни,
Ах, ушли куда?
Почему они
Так летят всегда?
Речка вдаль бежит,
Вспять не потечет.
Юность убежит,
Снова не придет.
Молодость – заря,
Подожди, не рвись.
Молнией горя,
Душу не трави.

* * *

Хĕвеллĕ кун туссем нумайччĕ,
Ман тавралла пĕрмай куматчĕç.
Çил-тăвăл килчĕ те – çухалчĕç,
Пĕччен çеç тăратса хăварчĕç.

Хам пуçлăх чух юлташ чылайччĕ,
«Ах, пулăшсам!» – тесе пыратчĕç.
Унтан кайсан сасартăк манчĕç,
Таçта мура кайса пытанчĕç.

Мул пур чухне аса илетчĕç,
Ялан кивçен ыйтма килетчĕç.
Çука ак юлтăм та – йăлт пĕтрĕ,
Тăван-пĕтен ситрелчĕ, çĕтрĕ.

Вăй пулнă чух пурте чĕнетчĕç,
«Ниме тĕрекĕ – эсĕ», – тетчĕç.
Кĕç ватлăх çитрĕ – чакрĕ халăм,
Ал сулчĕ ман çине «тус-халăх».

* * *

Светило солнце над судьбою –
Друзья за мною шли гурьбою.
Как буря грянула – отстали,
На произвол судьбы оставив.

Я был начальник – даже ночью
Друзья просили все помочь им.
Когда оставил должность эту –
Друзей и след простыл, их нету.

Когда же денежки водились,
Взаймы просить ко мне ходили.
Когда без денег стал, как нищий,
Уже никто меня не ищет.

Был крепок и имел я силы –
Все помогать меня просили.
Как стал чуть немощным и старым –
«Друзей» совсем-совсем не стало.

* * *

Кĕрлет тăвăл – ката хумханать,
Ватă шĕшкĕ йĕрсе авăнать.
Сарă мăйăрĕ ун тăкăнать,
Тăкăнать-çке çĕре шăпăр-шăпăр.

Çиçет çиçĕм – тĕнче çаврăнать,
Пӳрт-çуртсен тăрринчен шыв анать,
Чарăнмасăр пĕрмай тăкăнать,
Тăкăнать-çке çĕре шăпăр-шăпăр...

Сӳнчĕ ĕмĕт – чĕрем пăлханать,
Ăраскал çукран чун хурланать.
Ах, куççулĕм юхать, тăкăнать,
Тăкăнать-çке çĕре шăпăр-шăпăр.

* * *

Буря ревёт – в роще ветки рвёт,
Старый орешник гнётся, ревёт.
На землю падает желтый плод,
Так и падают орехи на землю.

Сверкнёт молния – и всё вверх дном,
Гремит, сотрясается весь дом,
Вода течёт, стекая, кругом,
Так и течёт водица на землю.

Гаснет мечта – тревога в груди,
Злая участь душу бередит,
Слёзы струятся из глаз, гляди,
Так и струятся слёзы на землю.

* * *

Тăпраран пулайрăмăр,
Тăпраран тухайрăмăр.

Çĕр çине килейрĕмĕр,
Çĕр имне илейрĕмĕр.

Хĕвеле илентĕмĕр,
Хĕвелпе килентĕмĕр.

Хăна-вĕрле пултăмăр,
Хăналанса куртăмăр.

Тĕнчерен уйрăлатпăр,
Тĕнчерен ăсанатпăр.

Тăпрапа варăнатпăр,
Тăпрана çаврăнатпăр.

* * *

Мы землей завязаны
И землей помазаны.

Как на землю встали мы,
У земли все заняли.

Солнца здесь дождались мы,
Солнцем наслаждались тут.

И собравшись силами,
Славно погостили мы.

Белый свет здесь встретили –
Будем на том свете мы.

Мы землею связаны:
Этим же все сказано.

* * *

Выртса тăтăм кăп-кăпăш шур вырăн çинче,
Ют çĕрте сăпкари ача пек савăнайрăм.
Пурпĕрех килĕмри тӳшекрен çемçине
Эп нихçан та, ниçта та курмарăм.

Çирĕм-савăнтăм тĕрлĕ çĕршыв апатне,
Активмен çимĕç, тен, хăвармарăм.
Пурпĕрех килĕмри çăкăртан тутлине
Эп нихçан та, ниçта та курмарăм.

Пулса куртăм чылай халăхсем хушшинче,
Вĕсен чун хĕмĕпе ăшăнайрăм.
Пурпĕрех килĕмри пек пӳрт-çурт ăшшине
Эп нихçан та, ниçта та курмарăм.

* * *

На чужбине бывал я в дому не одном,
Мне стелили постель в лучшем виде,
Только мягче перины, чем в доме родном
Никогда и нигде я не видел.

На чужбине бывал я за полным столом,
Самый вкусный обед был мне ведом,
Только хлеба вкуснее, чем в доме родном,
Никогда и нигде не отведал.

Я общался с народами в крае чужом,
Был по-своему каждый приветлив,
Но такого тепла я, как в доме родном,
Никогда и нигде не заметил.

ÇИЛПИ ÇĂЛ КУÇĔ

Эй, çăл куç, Çилпи çăл куçĕ,
Тухатан пуль тупата.
Тайăлать хăйне хăй пуçăм
Пăлханса сан умăнта.

Тăрна куçĕ евĕр тăрă
Шыв тухать ту тĕпĕнчен.
Йăл та йăл çиçсе чул тăрăх
Вăл васкать курма тĕнче.

Вăйлă шыв эс – улăп-паттăр.
Çул хыван чул витĕрех.
Ту сана имне панах-тăр:
Пур шывран эс сиплĕрех.

Эс, çăл куç, тӳпе пек янкăр,
Çут чĕр кĕмĕл пек таса.
Чăваша (ху та туян-тăр!)
Эс вăй-хал тăран парса.

Хамăрти сӳнми хастарлăх,
Чăтăмлăх, тăванлăх та,
Юрату, илем, сăпайлăх... –
Пурте пур сан сăнăнта.

Эс ăсталăх пехилленĕ
Кĕçтенттин пиччемĕре.
Ухсая телей пилленĕ
Çĕклеме чĕлхемĕре.

СИЛЬБИЙСКИЙ РОДНИК

Гей, родник, родник Сильбийский!
Завораживаешь, знать.
Стал моей душе ты близким,
Я спешу к тебе опять.

Светлая твоя водица,
В даль стремясь из-под горы,
Сквозь пласты веков струится
С древней самой той поры.

Путь с трудом свой пробивая,
Как и Улып – богатырь,
Мощь горы в себя вбираешь,
Чтоб раздаться вглубь и вширь.

Ты – как небо голубое,
Ты – как ртуть и серебро,
Горд чуваш всегда тобою,
Даришь ты ему добро.

Нашу скромность и отвагу
Ты в себе хранишь, родник,
Есть терпимость в твоей влаге,
Ты – любви, родству сродни.

Константина одарил ты
Даром речи, души жечь.
И Ухсая подарил нам,
Чтоб сберечь родную речь.

Сан патна килсе пуç тайнă
Уçлăх хыççăн Андриян.

Çĕнĕ вăй илсе вăл кайнă
Халăхшăн çунма ялан.

Эп çĕр пĕлĕт урлă вĕçрĕм,
Çитрĕм çичçĕр çухрăмран.
Ывăç хыççăн ывăç ĕçрĕм
Шыв асамлă çăл куçран.

Эс, сăвапăм, пулăшсамччĕ
Шурă çӳçлĕ ывăлна.
Хăватна ăна парсамччĕ
Юп кӳмешкĕн халăхна.

Эх, çăл куçăм, шав тăрсан та
Умăнтан каяс килмест.
Сывă пул, çапах. Тапсах тăр,
Эс пулсан чăваш пĕтмест.

Космонавта Андрияна
Ты всегда к себе манил,
Чтоб земляк наш знатный рьяно
Ради Родины творил.

Как и многие тут гости,
Прибыл я издалека,
Чтоб взахлеб испить из горсти
Воду чуда-родника.

О, родник – краса природы,
Дай мне силы, помоги,
Чтоб родимому народу
Смог вернуть свои долги.

Сединою убеленный,
Попрощаюсь я с тобой:
Коль звенишь водой студеной,
Будет жить народ родной!

ПОЭТ СУКМАКЁ

Çак çула «Ухсай сукмакё», теççё.
Тăсăлать ялтан вăл сăрт çине.
Хăнасем килсен, ялан чёнеççё
Хăпарса курмшкăн çак ене.

Çаврака Кёсле-ту, çăкăр евёр.
Тăрринчен курнать мёнпур тёнче:
Ав – Слакпуç, вăрманё-уйё евёк,
Пуйăсё иртет ял леш енчен.

Сукмакне ачалăхрах пуçланă,
Чупнă майăн çеремпе çарран.
Тўпеме яш чух тем чуль хутланă:
Утă çулнă, татнă пултăран.

Поэта шăпи таçта та янă,
Ытлашши пылак пит хыптарман.
Пурпёрех вăл чёринче усранă
Сукмака. Ăна нихçан манман.

Сайраран тăван яла пырсассăн
Вăл çўренё савнă çулпала.
Ытарми ыр сăнсене курсассăн
Чунё тулнă савăнăçпала.

Çавăнпах чикме хушса хăварнă
Хăй вилсессён Кёсле-ту тăрне.
Çав çулпа кайран çынсем хăпарнă
Пытарма поэзи çăлтăрне.

Çамрăксем халь сукмакпа утаççё
Палăкё патне чечек йăтса.
Чёлхене савма тупа тăваççё
Сăвăç халалне асра тытса.

ТРОПА ПОЭТА

Называют все «Тропой Ухсая»
Ту тропинку, что ведет наверх,
От села к поэту увлекая
Экскурсантов и приезжих всех.

Кэследу*, как коврига поката:
Все здесь дорого, близко до слез.
Край, полями и лесом богатый,
Вдруг пронзит стук вагонных колес.

В детстве проторил тропинку эту,
Босиком взбегая на курган.
В юности ходил сюда нередко
Покосить траву и рвать пултран**.

И куда бы жизнь не закидала,
Видел, как судьбы своей финал,
Он тропинку эту через дали
И её частенько вспоминал.

У порога побывав родного,
По родным местам ходить любил.
Возвращался к ней тропой он снова, –
Каждый встречный близок был и мил.

Поздней ночью или светлой ранью,
Летом иль зимою, как всегда,
Как бы в такт Поэта завещанью
Здесь теперь горит Его звезда!

По тропинке ходят молодые,
А в руках у каждого букет.
Клятвенно звучат слова родные –
В их сердцах останется Поэт!

---

* Кэследу (чув.) – Гусли – гора, на вершине которой покоится прах поэта Я.Г. Ухсая.
** Пултран (чув.) – борщовник.

* * *

Çурхи вăрмана мĕн илем кӳрет?
Ешĕл хурăн çулçи – çав кӳрет.
Кĕрекемĕр илемне кам кӳрет?
Маттурах та хăна – çав кӳрет.

Сĕм вăрманăн илемне мĕн ярать?
Кăпчанкăн хăр çулçи – çав ярать.
Кĕрекемĕр илемне кам ярать?
Урмăшакан хăна – çав ярать.

* * *

Что же станет красой леса весной?
Красой леса весной – лист резной.
Кто же застолье украсит, родной?
Краса застолья – гость чуть хмельной.

Что омрачает вид леса порой?
Видать, бересклета лист дрянной.
Кто омрачает застолье, родной?
Видать, пьяный гость тому виной.

* * *

Эх, эсё, вăхăт, вăхăт, вăхăт!
Ма ытлашши чупан-ши хăвăрт?
Сана сиссе те юлаймарăм,
Ним те туса хăвараймарăм.

* * *

Ох, ты, время, время, время, время!
Мчишься, оставляя жизни бремя.
Незаметно, вроде, пролетело, –
Не успел я сделать свое дело.

* * *

Ака-уйăх, кăн-кăвак тӳпе...
Кайăк-хур килет хăй еккипе.
Саламлать, «Ки-как!» тет сассипе,
Ман куççуль тухать савăннипе.

Юпа-уйăх, сивлекрех тӳпе...
Кайăк-хур каять хăй еккипе.
«Лайăх çитĕр, таврăнăр чипер!»
Ман куççуль тухать хурланнипе.

* * *

Месяц – ака*, небосвод ясней…
Возвращается стая гусей.
Гуси гогочут – мне веселей.
Слезы текут по щеке моей.

Месяц – юпа,** небосвод темней…
В отлет собралась стая гусей.
Гуси гогочут – мне же грустней.
Слезы текут по щеке моей.

---

* ака (чув.) – апрель месяц.
** юпа (чув.) – октябрь месяц.

* * *

Н.А.Енилина

Каласса ларнăçем санпала
Ăшă хум ачашлать кăмăла,
Умăмра чӳхенет пек Пăла,
Пăваçуль йыхăрать пек мала.

* * *

Гаврил Луçа

Яшлăхри юлташăм Кавĕрле,
Йĕпреçре туптантăмăр пĕрле.
Çав кунсем çĕтмерĕç пек ахаль,
Чăвашсем кăштах паллаççĕ халь.

* * *

Стерлĕри педучилищĕри
чăваш студенчĕсене

Тăван халăхшăн веретĕр юнăр,
Чăвашлăхшăн кĕрешĕр, çунăр.

* * *

Н.А.Енилину

По Буинскому ль тракту идем?-
Так беседу ведем мы вдвоем.
И как будто влечет нас Була…
Задушевною встреча была.

* * *

Гавриилу Лусь

Молодости, друг мой, Гавриил,
Край ибресинский нас закалил,
Не напрасно, знать, прошли те дни,
Коль в народе знатным мы сродни.

* * *

Студентам
Стерлитамакского педучилища

И пусть в борьбе горит у вас душа
За Новый День, достойный чуваша!

АВАН-И, ЯЛĂМ?

Поэма

Анлă хирĕн тӳпемне тухсассăн
Курăнса каять тăван кĕтес.
Чун çунат хушать, чĕрем хаваслă:
Ывăлна, Еншик, кĕтен-ши эс?

Пăлханса эп ялăма кĕретĕп
Тӳрĕ, тикĕс Тăрăн çулĕпе.
Çĕн урам – ак, савăнса иртетĕп
Хăтлă шур керменĕн çумĕпе.

Ĕлĕкхи çĕртех ларать пек ялăм:
Ав – Тукас, Çĕнкас, Лекке касси.
Чул çуртсем, тен, ытларах пуль халĕ.
Сахалрах пек çеç ача сасси.

Ыррине курсан ма хăпартланмăн:
Те вăрман, те сад ял варринче
Хăйăр çийĕн хăвăрт ӳссе ларнă
Эп ютра çӳренĕ çулсенче.

Ик çунат пек ик ем-ешĕл хырлăх
Ыталать яла, кур, ик енчен.
Хăй валли хăй тунă халăх ырлăх,
Киленет халь ун ытамĕнче.

ЗДРАВСТВУЙ, СЕЛО !

Поэма

Как взойдешь за нивою на взгорье,
Где Еншик* раскинулся окрест –
Сразу же предстанет перед взором
Уголок ста тысячи чудес.

С трепетом иду в село родное
Туруновским славным большаком.
Прохожу я улицею новой,
Где дворцом глядится каждый дом.

Так же всё, хоть новшеств и немало:
Вон – Тукас,**Сенькас***и Леккекас.****
Каменных домов побольше стало,
Только меньше слышен детский глас.

Доброму, разумному все рады:
И с тех пор, пока я не был здесь,
Посреди села – делам награда –
То ли сад раскинулся, то ль – лес.

И боры сосновые, как крылья,
Обвивают с двух сторон село,
Чтобы людям сказку сделать былью,
Чтоб лицо у каждого цвело.

---

* Еншик (чув.) – село Яншихово Батыревского района, малая родина автора.
** Тукас ***Сенькас ****Леккекас (чув.) – названия улиц.

Çур çитсен унта шăтса тухаççĕ
Хĕрлĕ-сарă-шурă чечексем.
Çумăр хыççăн кăмпасем пухаççĕ
Ваттисем те вĕтĕр-шакăрсем.

Шăпчăксем каçса кайса юрлаççĕ,
Авăтать сиксе чăпар куккук.
Шеп кунта яш-кĕрĕмшĕн çу каçĕ –
Уншăн савăк вырăн урăх çук.

Çĕкленсе ял хушшипе утатăп,
Çынсене иртетĕп пуç тайса.
Курăнмаççĕ аслисем – туятăп,
Çулсерен пыраççĕ сайралса.

Пĕр самант: ак шухăша путатăп,
Асăма килет ял-йыш шăпи.
Çăмăлах пулман вăл, астăватăп,
Нушине унне эп манăп-и!

Выльăхне те чĕрлĕхне ӳстернĕ,
Уй-хирте мĕн чухлĕ тăкнă тар.
Вăрманта пур-çук вăйне пĕтернĕ,
Пурпĕрех курман-çке пархатар.

Куç умне тухса тăрать аннеçĕм:
Çийĕнче ик аркăллă кĕпе,
Канăççăррăн куçĕсем çиçеççĕ,
Хыпăнса чупса çӳрет ирпе.

Автанран та маларах тăратчĕ,
Васкаса утатчĕ шыв ăсма,
Пултăран яшки çакса яратчĕ,
Кĕç ларатчĕ вăл ĕне сума.

Зацветут весною тут же, рядом,
Разные и пестрые цветы.
А с дождями грибники нагрянут,
Наслаждаясь царством красоты.

Тут кукушка годы подытожит,
Могут соловьи с ума свести,
Благодать влюбленным ночью тоже –
Летом места лучше не найти.

По селу шагаю я, как прежде,
Словом вдохновляя земляков.
Старики встречаются все реже,
С каждым годом меньше стариков.

Лишь один момент: его едва ли
Вытравишь из памяти лихой –
Как селяне наши выживали,
Горюшка, хлебнув тогда с лихвой.

Со скотом возились то и дело,
Поле поливали потом тут.
И в лесу трудились ошалело,
Не имея ничего за труд.

Пред глазами вижу образ мамы,
Платьице с оборками на ней.
Как хлопочет по дому упрямо
Ради дорогих своих детей.

Раньше петухов она вставала,
По воду ходила по утрам.
Подоить корову успевала
И варила суп нам из пултран*.

---

*пултран (чув.) – борщовник.

Виç пепки – эпир – тулта выртатпăр
Шап-шурах чаршавăн айĕнче.
Лăпкăн-лăпкăн, канлĕн çывăратпăр.
Тутлă-çке, ах, ыйхă ир çинче.

Пĕр хут мар анне пырса итленĕ,
Чаршава хуллен сире-сире.
Кашнинчех:«Кăшт çывăрччăр-ха», тенĕ,
Вăратма шелленĕ вăл пире.

Тăхтасан та тăратмах çав лекнĕ:
Çумлама каять ял – уй кĕтет.
Сар хĕвел те чылаях çĕкленнĕ:
«Ачасем, йышран ан юлăр» тет.

Аннепе эпир малта пыратпăр,
Туртнă хамăр урапа-метек.
Шăллăмсем кайра утаççĕ паттăр
Кĕрешме каян ик улăп пек.

Çăпата сырса аннемĕр тухнă,
Ачисем эпир пурте çарран.
Çулĕ пĕчĕк мар – шăп ултă çухрăм.
Çитмелле утса унта çуран.

Çухрăм хыççăн çухрăм чакаратпăр,
Парлатса юлать хыçра тусан.
Ак вир уйĕ – çумлама пуçлатпăр
Пĕр самантлăха ларса кансан.

Кунĕпех хастарлăн туртнă майăн
Тал пиçен те эрĕм, йыт пырши
Çунтаран хĕвел çатмийĕ айĕн
Эх, мĕнле эпир чăтайнă-ши?
Трое нас за пологом за белым –

Спим в сенях, не ведая забот.
До хлопот домашних нет нам дела –
На заре сон сладок и глубок.

Вся в делах летала, не ходила,
А порою не смыкала глаз.
К нам за полог часто заходила,
Но жалела, не будила нас.

Хоть и тяжело, но, как бывало,
Приходилось все-таки вставать.
«Детки мои, солнце уже встало,
От селян не гоже отставать».

С матерью мы впереди шагаем
И телегу тянем за собой.
Младших своих братьев увлекаю
На прополку нынче я, как в бой.

Мать в лаптях, а мы, босые дети,
По дороге пыльною идем.
Хоть босые, но за все в ответе
И до цели все равно дойдем.

Так пешком, осилив наши дали,
Обжигая ноженьки в пыли,
Километров шесть мы прошагали
И до поля нужного дошли.

Вот и просяное наше поле,
Тут полынь, татарник и вьюнок…
Солнце обжигает нас до боли,
Но должны управиться мы в срок.
Каç енне çум курăка тиетпĕр

Майласа-пусса метек çине.
Тертленсе вара тĕнкĕлтететпĕр
Инçетре ларан Еншик ялне.

Ĕнтĕ çитнĕ – картишне кĕретпĕр,
Саламланăн ĕнĕрлет ĕне.
Савăнать çум курăкшăн, сисетпĕр:
Халь чипер ирттерĕ хĕллене.

Пулчĕ ку – ачалăхри пĕр тĕслĕх.
Куртăм вĕсене эп «мăй таран».
Самана сакки, чăнах, çĕр тĕслĕ.
Ăнланать ăна Еншик аван.

Туливар, Хăрвар, Кипет çăварĕ –
Хуп-хура тăпраллă уй-хирсем,
Сирĕн тăрăх эп мĕн чуль хутларăм,
Уçрĕç ман çула шăп çав йĕрсем

Чĕлтĕрти вĕт хумлă Пăла шывĕ,
Апăрша та Çирĕклĕ, Мишке
Лăпкаса мана ӳстерчĕç сывă.
Тав тума çеç хам пĕлмерĕм-çке.

Ялăм, эс мĕн чухлĕ нуша куртăн,
Шыраса телей çак тĕнчере.
Тем чуль ирсĕр этемсем тĕл пултăн–
Çурăлать пуль асилсен чĕре.

Таптама, сана пăвма хăтланчĕ
Чингисхан йытти хаяр Сармай.
Мул ялтан ун чух пайтах саланчĕ,
Çухату пуçтарăнчĕ самай.
К вечеру телегу загружаем,
Тащим – лишь бы ноги не свело.
И с таким тяжелым «урожаем»

Вновь спешим в родимое село.

Так доходим до родного крова,
Вкатываем воз во двор родной.
Радуясь траве, мычит корова,
Значит, будет сытою зимой.

Вот один всего пример из детства,
Мы не знали что такое шик.
Никуда от прошлого не деться –
Это понимает наш Еншик.

Туливар*, Хорвар**, Кипе́ти*** устье –
Черноземом славятся, маня.
Сколько прошагал по ним без грусти.
О, поля, взрастили вы меня!

Ласково Була меня качала,
Сиреклэ, Мишке да Абыржа
Отмечали жизни всей начало,
Расплескалась в них моя душа.

О, село, нужду ты повидала
В поисках тепла и доброты.
Злые силы над тобой витали,
Но достойно все стерпела ты.

В землю затоптать тебя пытался
Чингисхана пёс – сатрап Сармай.
Но никто врагу тогда не сдался,
Хоть урон большой понес наш край.

---

*Тулива́р **Хорва́р ***Кипе́т (чув.) – названия плодородных полей.

Пур-пĕрех чура вăл тăваймарĕ
Ман мăнаçлă, харсăр халăха.
Анчăка аллах та каçармарĕ,
Ылханса ăсатрĕ тамăка.

Ĕç çукран, Еншикĕм, асаплантăн,
Эх, ăçта çитмерĕç ачусем.
Пурнăç пулаймасть ялан вăл янтă,
Вĕçĕмрен лекмеççĕ салмасем.

Çĕн çĕре вуншар çемье ăсанчĕ
Ăраскал та ырлăх шыраса.
Чĕлхине те, йăлине те манчĕ,
Пач çухалчĕ, тухрĕ вырăса.

Пур-пĕрех пĕтсе лармарăн, ялăм.
Пăрахмарăн уявсем тума.
Акатуй кĕрлетчĕ савăнмалăх,
Сăпасра пит ырăччĕ канма.

Çăварни иртетчĕ çĕкленӳллĕн,
Пур яшши те пур ачи-пăчи
Лашапа чупатчĕ хĕпĕртӳллĕн
Ялăм тăрăх хӳхĕм катаччи.

Мăнкунра ĕрет ĕçки тăватчĕç
Аслисем йăха çирĕплетме.
Çамрăксемшĕн – кăруççел аванччĕ,
Пит пахаччĕ таканкки сикме.

Çăрасем эп пĕчĕк чух çакмастчĕç
Алăкпа хапха тавраш çине.
Кантăра çыхса çеç хăваратчĕç
Кăшт тухса кĕрес-тĕк çын çине.
Он не смог поработить, однако,

Гордый и свободный мой народ.
Не простил аллах его – собаку,
В ад отправил, проклиная род.

А потом, Еншик, ты жил в печали:
Неисповедимы те пути –
Твои дети по миру скитались:
Где б работу сносную найти?

Семьями осваивали дали,
На чужбине, на земле чужой.
Все обряды наши забывали,
Позабыв совсем язык родной.

Все же ты, село, не оскудело,
Праздниками радовало нас:
Акатуй* справляли то и дело,
Отдыхать умели и на Спас.

Масленицу славно провожали,
Запрягая резвых лошадей.
Чаем и блинами угощали,
Уважая взрослых и детей.

А на Пасху – издревле в ходу ли, –
У родни скрепляли древний род.
Карусели были и ходули… –
Веселился весь честной народ!

Были без замков в те годы двери:
И от дома, да и от ворот,
Ибо каждый знал тогда и верил,
Что никто ничто не украдет.
Шутламан, Еншик, эс пуç усмашкăн,

Утнă пĕрмаях мал ĕмĕтпе.
Чарăнман нихçан та юптармашкăн,
Туслă пулнă кулăшпа, шӳтпе.

Йăхсене мĕн ят кăна паман-тăр:
Хĕлĕхвун, Çатан та Пăтавкка,
Сапака, Шакки, Чанкки те Кантăр,
Качака, Кăркка та Юманкка.

Халь пăхатăп та танлаштаруллăн
Ёлĕкхи ялпа хальхи яла:
Вăхăтпа, Еншикĕм, çураçуллăн
Чылаях эс кайнă малалла.

Çуртусем сан хăтлă, ирĕк, капăр;
Тĕрĕллĕ, шур кирпĕчрен, чултан.
Ăшĕнче мĕн-мĕн кăна курмастпăр:
Кавирсем, хитре сĕтел-пукан...

Çыннисем чылайăш машиналлă,
Тĕслĕ телевизор килсерен.
Еншике те, пур ялпа пĕр танлăн,
Халь çӳрет автобус кунсерен.

Тухтăр, çар çынни, ăста ертӳçĕ,
Инженер, вĕçевçĕ, капитан,
Ик профессор, вун-вун вĕрентуçĕ, –
Кам кăна тухмарĕ ялăмран.

Жило так село мое родное,
И с надеждой шло оно вперед,
На судьбу не сетуя, не ноя…
Да и нынче с юмором живет.

Прозвища у каждого пикантны:
Хелехвун[1], Сятан[2] и Патавкка[3],
Сапака[4], Шакки[5], Чанкки[6] и Кандор[7],
Качака[8], Каркка[9] да Юманкка[10].

Прошлое твое сопоставляя
С нынешним, ту разницу нашел:
Ты, Еншик, в такт времени шагая,
Далеко вперед уже ушел.

И дома-дворцы, как для примера, –
Вложено немало тут труда.
Как не удивиться интерьеру:
И ковры, и мебель хоть куда…

У ворот стоят автомобили,
Телевизор смотрят все цветной.
Рейсовый автобус вон пробили –
Можно в город съездить в день любой.

Врач, военный и рабочих много,
Инженер, пилот и капитан,
И профессора, и педагоги… –
Каждый славный лишь тобою дан.

---

*Акатуй (чув.) – праздник сева, то же, что и сабантуй.
[1] Хелехву́н (чув.) – волос конский, [2] Сята́н – корзинка,
[3] Патавкка́ – будовка, [4] Сапака́ – гроздь, [5] Шакки́ – камешки,
[6] Чанкки́ – подражание звяканью листа, [7] Ка́ндор – конопля,
[8] Качака́ – коза, [9] Каркка́ – индюк, [10] Юманкка́ – дубовый.

Ӳсӗмне санне, тăван Еншикӗм,
Малалла татах çӗклес килет.
Хăпартасчӗ хуть пӗр виçӗ сикӗм
Те пулин ăна, эх, çӳлелле.

Шел пулин те, сăнарах пăхсассăн,
Шупкарах тӗссем сан тем чухлех.
Ял çынни çаплах сывлать-ха ассăн,
Ёç укçи те лекменпе пӗрех.

Ёçкӗпе мӗн чухлӗ пӗтрӗ халăх,
Тантăшсем те чакрӗçӗ чылай.
Инкесем те пăсăлаç çав халӗ,
Ханшапа туслашрӗç-çке, ай-ай!

Йăласем чакнишӗн хурланатăп:
Сурхури тумаççӗ çамрăксем;
Уява чӗнмест текех Анатăм,
Халь унта лараççӗ çурт-йӗрсем.

Тăвансем халь ӗрете каймаççӗ,
Сар хӗрсем тумаççӗ хӗр сăри,
Çимӗкре вăйăа пуçтарăнмаççӗ, –
Йăласем пӗтсен мӗн пур ырри.

Урамсем тирпейсӗр, пӗр çеремсӗр,
Пылчăкпа йăлт пӗтнӗ çăрăлса.
Пӳрт-çуртсен умне, чыса пӗлмесӗр,
Тем те пăрахаççӗ кăларса.

Всех твоих успехов я, быть может,
Не назвал, родимое село.
Но хочу чуть-чуть их приумножить,
Чтобы ты светлее расцвело.

К сожаленью, есть еще заботы, –
Хоть пиши о них, хоть не пиши, –
На селе достойной нет работы:
Всюду – только жалкие гроши.

С белым светом многие простились –
Пьянство горемычных унесло.
Женщины к спиртному пристрастились.
Эх, куда ты катишься, село?!

Больно мне за наши за обряды,
Не до них сегодня молодым:
Сургури* теперь они не рады,
И Уяв** для них почти, как дым.

К родственнику родственник не ходит,
А девичника простыл и след.
Молодые хоровод не водят,
Без обрядов – и порядка нет.

Улицы загажены местами,
Вместо дерна нынче – грязь да хлам.
Так село прекраснее не станет.
Как стерпеть начальству этот срам?!

---

* Сургури (чув.) – старинный зимний праздник молодежи, совпадающий с Рождеством.
** Уяв (чув.) – праздник, игрище.

Кашнинчех эп кулянса илетӗп,
Хисепрен кӑларчӗç Мишкене.
Пуçлӑхсен кӑшт намӑс çук-ши, тетӗп:
Ма çаплах тумаççӗ пӗвене?

Сан сӑнна çаплах яраç-ха, ялӑм,
Пӗчӗк лӑпчӑк клуб та кивӗ шкул.
Курӑнан капла эс мӗскӗн халлӗн
Пурӑнан пулсан та çӗр-çӗр çул.

Эх, Еншикӗм, пурпӗрех шанатӑп
Эс сар кун çӗршывӗ пуласса.
Ӑшӑмра санпа çеç хутшӑнатӑп,
Сан çинчен çӳретӗп шутласа.

Ерипен ак çуртӑма кӗретӗп:
«Сывӑ–и, аван-и, савнӑ кил!».
Пуç таятӑп, сӑхсӑхса илетӗп:
«Ман çӑл куçӑм, пар мана пехил!».

Да и на Мишке гляжу уныло:
Тот же мусор виден там и тут.
Как же хорошо, уютно было б,
Если запрудили бы здесь пруд.

О, село, ты не достойно что ли
За свои за сотни славных лет
Клуба поприличней, новой школы,
Чтоб оставить внукам добрый след.

О, Еншик, и все же в тебя верю!
И с тобой, село, я каждый миг.
Ты открыл мне в будущее двери,
Смысл жизни я с тобой постиг.

Вот и дом родной, ему так рад я:
«Здравствуй, дом любимый! Как ты тут?»
Поклонюсь, крестясь я троекратно:
«Мой Исток, благослови на труд!»

ТУПМАЛЛИ

Тёссемпе туйăмсен алхасăвĕ 6
Аннемĕр,эсĕ – сар хĕвел 8
Эп телейлĕ 12
Шупашкар 14
Утаççĕ салтаксем! 16
Шурăмпуçĕн çăлтăрне 18
Сарă хĕвел савнă пек… 20
Юрату – сар тĕпел... 22
Пулар-и пĕрле 24
Асăма килетĕн эс анчах... 26
Кĕтсем салтака 28
Иртет ĕнтĕ хура кĕркунне... 30
Çуллахи кану пуçламăш умĕн... 32
Ан кай, çамрăклăх 34
Хĕвеллĕ кун туссем нумайччĕ... 36
Кĕрлет тăвăл – ката хумханать 38
Тăпраран пулайрăмăр... 40
Выртса тăтăм кăп-кăпăш шур вырăн çинче... 42
Çилпи çăл куçĕ 44
Поэт сукмакĕ 48
Çурхи вăрмана мĕн илем кӳрет? 50
Эх, эсĕ вăхăт, вăхăт, вăхăт... 52
Ака-уйăх, кăн-кăвак тӳпе... 54
Калаçса ларнăçем санпала... 56
Яшлăхри юлташăм Кавĕрле... 56
Тăван халăхшăн вĕретĕр юнăр... 56
Аван-и, ялăм? (Поэма) 58

ОГЛАВЛЕНИЕ

Предисловие 7
О, мама – нежная заря 9
Я – счастливый 13
Шубашкар 15
Солдаты идут! 17
Утреннюю да звезду 19
Солнце, выйдя из-за туч... 21
Ведь любовь – красный угол в тиши... 23
Вдвоем 25
Все мои мечты – только ты... 27
Солдат вернется 29
На исходе осенние дни... 31
Это было до каникул, летом... 33
Юность, подожди 35
Светило солнце над судьбою... 37
Буря ревёт – в роще ветки гнет... 39
Мы землей завязаны... 41
На чужбине бывал я в дому не одном... 43
Сильбийский родник 45
Тропа поэта 49
Что же станет красой леса весной... 51
Ох, ты, время... 53
Месяц-ака, небосвод ясней... 55
По Буинскому ль тракту идем... 57
Молодости друг мой, Гавриил... 57
И пусть в борьбе горит у вас душа... 57
Здравствуй, село! (Поэма) 59

САНДОР АКСАР

ÇИЛПИ ÇĂЛ КУÇЁ

СИЛЬБИЙСКИЙ РОДНИК

Стихи, песни и поэма

Перевод с чувашского *Анатолия Смолина*

Редактор *Горшков А. Е.*
Художественный редактор *Смолина Л. В.*
Компьютерный набор и оригинал-макет *Мефодьев В. А.*